8-мĕш çул тухат̆. Пĕр № 10 пус

Пĕтĕм тĕнђери пролăттарисем, пĕрлешĕр!

# КАПКĂН

1932
АВКУСТ
9-МĔШ №



**Лăйăх условисем**

— Пирĕн колхосра ĕç условисем пит лайăх.

— Пирĕн тата лайăхрах—Сталин йулташăн ултă условисем!



# ПАЂУК УШӐНТЕ



Пуху. Пӗрремӗш прикатӑри колхоçнӗксен пуххи. 50 колхоçнӗк. Пурте вӑй питти çынсем. Вӗрен пек тимӗрсене улӑм пӗрђи пек таткалӗç вӗсем. Кашнин хӑлхи Петӗр токлатне итлесшӗн çунаť..

Кашни сӑмахах çӑтасшӑн. Петӗр комсомолӗç вӑл активис. Парттипе правиттӗлствӑ тырпул пуçтарса кӗресси çинђен йышӑннӑ постановлени çинђен каласа параť.

Пирӗн уйрӑмӑнах тырпул тӑкакӗпе кӗрӗшмелле. Тырпула типтерлӗ пуçтарса кӗменнипе Ђӑваш республӗкӗнђе кӑна 12,000,000 т е н к ӗ л ӗ х тырӑ пӗтет. Илтеççи сирӗн хӑлхасам 12 мӗлйун тенкӗлӗх тенине... Кӑçал та ун ђухлӗ пӗтерсен, ӑçта хуратпӑр намӑса.

Нумай ыйтусем сӳтсе йаврӗç вӗсем. Кашнин пуçне пӗрер кило усӑллӑ шухӑшсем кӗрсе ларђӗç. Акӑ прикатир ура çине тӑђӗ:

— Йулташсем,—терӗ вӑл,—кунта çакӑн пек претлошени пур—епӗр пӗрремӗш прикатӑри колхоçнӗксем правлени наретне пӑхӑнмастпӑр...

— Мӗнле пӑхӑнмастӑр,—сиксе тӑђӗ пӗр активисӗ,—кам йертсе пыраť пире—правлени!.. Ӑна пӑхӑнмасан кама пӑхӑнмалла. Кирлӗ мар ун пек претлошенисем!—урисене тӑпӑртаттарса, карланки таталасран хӑрамасӑр çухӑрђӗ пӗри.

Претлошенине вуласа пӗтерме те памасђӗ... вӑл ђармасан. Прикатир тин малалла вула пуçларӗ—пире сӗлӗ вырса пӗтерме 7 кун панӑ пулсан епӗр ӑна 6 кунтах пӗтеретпӗр. Çапла вара тырпула тӑккаланса йулма ђаратпӑр. Килӗшетре çакӑнпа?

— Килӗшес...

— Тӗп пултӑр тӑкак...

— Толой!..

— Йышӑнасса йышӑнтӑмӑртаха,— сӑмах илђӗ йулхав Пађук,—анђах есӗр ним те хӑрамастӑр мӗн... Ытла хытӑ вырнипе пилӗксем таталса кайсан, вара мен тӑвӑпӑрха, е...

— Пӗлм çук. Сан пилӗку таталса та ӳкӗ. А пирӗн таталас çук хуť,—хирӗçлерӗç колхоçнӗксем.

* * *

Пур прикатӑсем те тырӑ вырма тухрӗç. Пурте ӑмӑртаççӗ.

— Парӑр малтанхи премі! Епӗр малтан пӗтеретпӗр. Пӗр пуђаха та ана çине вырттарса хӑвармастпӑр. Пӗр пӗрђӗ тырӑ та колхос ампарне кӗмесӗр ан йултӑр. Сивӗпе йӗпе çанталӑкра ђирлесе ан вилтӗр. Епӗр вӗсене хӗрхентпӗр. Тырра тӑккаласа вырсан вӗсем темиçе мӗлйун пӑта çитеççӗ... Темиçе мӗлйарт пӗрђӗ йӗре-йӗрех вилеççӗ вара. Вӗсем те ӗçхалӑхне тӑрантарма çуралса ӳсеççӗ вӗт! Тӗп пултӑр тӑкак,—тет 1-мӗш прикатӑ.

Шнейккӑсем тырӑ анисене ӑмӑртмалла вырса çаратаççӗ. Шакатай пуçӗ пек çуталса йулаççӗ анасем. Кашни колхоçнӗк алли пӗрпӗринђен йуласшӑн мар. Нийепле те йуласшӑн мар вӗç ӑмӑртмалла çыхаççӗ кӗлтесем.

Малтанхи кунах тем пулђӗ Пађука. Пӗр кӗ çыхсанах тапак тӗтӗмне ехлете-ехлете çӑтма тӑнаť. Пӗр! кӑларса йараť тӗтӗмне. Пӑравус мӑкӑрлантараť. Тепӗр хӑравӑç çын пулсан:

— Ха, кунталла тырӑ хушшипе пӑравус мӑ лантарса килет. Çурмаранах татса хӑварӗ. Та тесе кутне урисемпе хӗнесех ђупма тытӑнӗ.

Колхоçнӗксем шалтах антраса:

— Пађук, тапак тӗтӗмӗпе ђирлерӗн што Çыхаймастӑн. Капла прикатӑна çӗртетӗн есӗ. Ы çӑва тӗпне ђӗлӗмна!—теççӗ.

— Пӗр минут тапак туртмасанах вилетӗп е Пилӗк таталсах ӳкет ман. Есӗр мана вӗлерес ни. Ӗçпех пӗтересшӗн,—тет Пађук татах ђӗлӗм паклаттарса.

Çывӑхри савӑт икӗ хутђен ӳллесе илђӗ. 11 хет. Прикатӑсем пурте пӗр çӗре апат çиме пуç рӑнђӗç. Апатне уйрах çитереççӗ..

Акӑ кунтах пӗр кӗтесре колхоçнӗксем пухӑн тӑнӑ та ђарӑнма пӗлмесӗр ахӑраççӗ. Пађук апат çисе тӑранђӗ те, пӗр тӑранинђен кулас тесе кулакансем ушкӑнне пыђӗ.

— Лах-лах-лах!

— Ах ах-ах-ха!..

Пушшех кулма пуçларӗç колхоçнӗксем Пађу курсан.

— Мӗнрен кулатӑр? Ӑçтан шыраса тупрӑр к лӑш,—ђатаймасӑр ыйтаť Пађук.

— Ав, хаçат култараť, çтенхаçат. Пырса пӑх патнерех.—Пађука хаçат умнех кӳртсе тӑратрӗ

— Ах-ха-ха-ха!.. Кам ку ђӗлӗм мӑкӑрлантара ђӗлӗмӗ хӑйӗнђен ик виçӗ хут пысӑк... ха-ха-ха ђарӑнмасӑр кулса тӑсрӗ Пађук.

Кӑна курсан колхоçнӗксем тата хытӑрах ахӑ татса йађӗç. Кунта ӗнтӗ апат çиекенсем пур пухӑнђӗç. 400 çын пурте ахӑлтатса кулаççӗ. Х шӗсем кулса каçса кайнипе çӗрте йӑваланса ла латаççӗ.

Хӗшсем çӳлелле сиксе кулаççӗ. Хӗшӗсем çур пек авӑнса ахӑлтатаççӗ.

— Есӗ ку, есӗ! Акӑ çырнине вула,—терӗ пӗр Пађука саметкӑна кӑтартса. Пађукӑн куçӗсе харӑс сиксе ӳксе саметкӑ тӑрӑх ђупма тытӑнђӗ

1-мӗш прикатӑри колхоçнӗк Пађук ђӗлӗм ђ рӗпе аптраса ӳкрӗ. Çавӑнпа та вӑл питӗ нађ ӗçлет. Епӗр колхоçнӗксене çакӑн çинђен асӑрха тарасшӑн: астӑвӑр, Пађукран айаккарах тар çӳрӗр. Унсӑрӑн вӑл хӑйӗн ђирне сире те йертм пултараť. Вӑл ђир хӑрушӑ ђир. Çынна каха йаракан ђир.

„Комсомолӗç".

Куна вуласан Пађукӑн куçӗсем курма пӑрахрӗ Йӗри тавра тӗтре йӑтӑннине анђах кураççӗ в

сем. Ђерине такӑм ҫивӗђ ҫӗҫӗпе йашлаттарнӑ пек тӳйанђӗ. Кӗҫ кравул ҫухӑрма тапратађђӗ вӑл. Анђах тӑн пырса кӗрнипе ђӗлхине тытса ђарђӗ.

— Ех, намӑс, намӑс!.. йулхавланма намӑс мӗн хаљ. Ҫынсем пекех утарлӑ ӗҫлемелле, утарлӑ!.. Вара лахлатса кулмаҫҫӗ манран. Текех кулӑш мишшенӗ пулас мар Ку намӑса утарлӑ ӗҫпе ҫуҫа йаратӑп. Пурпӗр ҫӑватӑп!.. тесе шухӑшласа Паљук та ытти колхоҫнӗксем хыҫҫӑн тырӑ вырма утларђӗ.

— Ха, кам ку? Вут хыпнӑ пек васкаҭ. Йепле хӑвӑрт ҫыхаҭ кӗлтесене хаљ,—теҫҫӗ колхоҫнӗксем Паљук ҫинӗ тӗллесе.

— Ара, Паљук, пилӗку гатӑлса ӳкмести? Кан. Пуҫ хӗрлӗ тӑрӑнса ӳкӗн.

— Какуй канмаха,—хирӗҫ перет Паљук,—малтан хам ҫинђи намӑса ҫӑвасха. Тайош мана та премиl. Епӗ ҫын мар штолӗ.. Ҫынах. Манран мӗншӗн лахлатса кулаҫҫӗ. Ҫук!.. тек култармастӑп!..

Ӗҫ вӗрет. Ҫӗршер ҫӗмелсем пӗрин хыҫҫӑн тепри ӑмӑртмалла шӑтса тухаҫҫӗ.

Тырӑ вырассине 5 кунтах пӗтерђӗ I-мӗш прикатӑ. Пӗр пуђахне тӑкмасӑр пуҫтарђӗ. Авӑн ҫапнӑ хыҫҫӑн хӗрлӗ опос туса патшалӑха тырӑ сутрӗ колхос. Пӗрремӗш премине илђӗ-илђех прикатӑ. Паљука та кӗпепе шаравар лекрӗ. Савӑннипе Паљук преми илсенех килне ђупрӗ.

— Ҫурӑм, ҫурӑм!...—ҫухӑрђӗ вӑл хӑрах ури алӑкран кӗрсенех.

— Мӗскер ҫурӑн, кӗпе ҫурӑним?—терӗ арӑмӗ тӗлӗннипе.

— Кӗпе сана. Хам ҫинђи намӑса (кахаллӑха) ҫурӑм. Утарнӗкле ӗҫленӗшӗн кӗпе шаравар пиллерӗҫ. Еп те утарнӗк хаљ. Вилиђђенех утарнӗк пулма сӑмах патӑм. Еҫрен мӗскер хӑрасси пур. Хытӑрах ыталаса илмелле ӗҫе. Акӑ ҫапла... арӑмне хытӑ пӑђӑртарӗ Паљук.

**Вениамин Туртуш.**

# Камне асту

Ӗнтӗ мӗн калаҫас, вулаканӑм та, мӗн сӑмахлас... Пулаҫ вӗт тӗнђере пурӑнмах тесе пурнакан етемсем... Калӑпӑр ак пӗр пуҫлӑх. Ун арӑмӗ ҫӗлекелесе панӑ кӑсйинђе ҫавра пиђеђӗ пур та, мӑйӗ ҫинђе пӗрӗн—кайӑн ларса ҫӳрекен ҫӳҫлӗ, йе шакла пуҫӗ пур. Ҫӑварӗ те пур унӑн, талӑкра пӗр-ик хутђен калаҫма (кӑмӑлӗ ҫавӑрӑнсан) ђӗлхи те пур.

Каҫарӑр, вулакансем! Кунта епӗ калавӑмри керойа малтанах сирӗнпе паллаштарма асӑрхаймарӑм. Ман пайанхи паллӑ керой вӑл—Аслӑ Ҫӗрпӳ йалӗнђи (Патӑрйел районӗ) уђиттӗл Мурсаккайӗв пулаҭ. Хурланулла ҫын вӑл. Вӑл кунӗпе Ҫӗрпӳ тӑрӑх ланккаса ҫӳренӗ хыҫҫӑн ывӑннӑ ҫинђен кӑштах ура-алла ҫемҫетесшӗн пулнӑ. Ҫавӑнпа та ывӑннине пӗлмесӗрех сӗтел хушшине тайӑнса кӑранташ илет те, шур хута тӗрлеме пикӗнет (ҫырма пӗлет вӑл!) Тӗрлесе пӗтерсен хуђӗ ҫине пӑхса краматтӗкла йӑнӑшсене тӳрлетет те, пӗр „неваљнайа“ лавккана ђуптараҭ. Лавккари „ҫук“ йатлӑ таварӗсене сутаймасӑр кунӗпе сӗнксе тӑракан копператтӑрӑн ҫывӑрас килнипе хупӑна пуҫланӑ куҫ хупанкийӗсем ку хута вуласан тӑруках алђӑраса ларђӗҫ.

„Савинӑв Алексей, санра ерех пур хута паракантран ерех парса йар памасан ӳркенсен ревкомиҫҫи камне асту 13-VII-32 ҫ. Мурсакайӗв“

— Мӗнле йапала ку! Ерех пӗтнӗ тӗлнех килђӗ. Памалађђӗ, конешнӑ .. хӑй, как калас, хамӑр ҫын. Анђах ерехӗм ҫук. Ӑҫтан та пулсан ханша та пулин тупса ӗҫтер ӗнтӗ,—тесе ӑсатрӗ „неваљнайа“ копператтӑр.

Ну, и тарӑхрӗ вара пирӗн ревкомиҫҫи пуҫлӑхӗ Мурсакайӗв. Ҫӑвӑнтах хӑйин коҫтӳмне ђӑр-ђар ҫурса тӑкса Шӑхасан кӳллине пӑрахас патнех ҫитрӗ. Тарӑхрӗ акӑш-макӑш. Вӑл тарӑхнинђен хӑраса ҫтена ҫумӗнђи саркӑм-шупка тӗсевлӗн йалтӑртатса тӑракан ҫурӑмлӑ таракансем те, тапӑра кайакан ӑшӑрханнӑ сурӑхсен йевӗрлӗ кӗпӗрленсе кӑмака хыҫне тарса пытанђӗҫ. Сӑрӑлтатса вӗҫекен шӑнасем те хӗлӗх манерлӗ урисемпе сӑмсисенђен тапса хӑварђӗҫ ӑна.

Кун пек тарӑхӑва кунђула ҫитсе те икӗ хутђен анђах курнӑ,—пӗрре „некрамӑтнайсене“ вӗрентсе тинкеленнӗ ђух, тепре хаљ (ҫынсем хӗрсе тыр-пур пуҫтарса кӗртме хатӗрленнӗ ђух). Вара тарӑхмасӑр. Ӗмӗтленнӗ ӗмӗте ӗҫпе пурнӑҫлаймасассӑн сысна та, йе кађака та тарӑхӗ (вӗсене ҫӗрулми, йе купӑста пахђинђен пӗр сӑлтавсӑр хӑваласа кӑларсассӑн). Мурсаккайӗв та ҫавах.. ҫавсен йевӗрлех вӑл тарӑхнӑ. Анђах кунта вӑл мӗнле кӑна тарӑхни ҫинђен пӗтӗмӗшпех каламӑпӑр. Вӑл ун ҫинђен хӑй „спетсиаљнӑ“ ыйту лартса сутра каласа парасшӑн. Сут умӗнђе... Пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ умӗнђе ответлӑ сӑмахпа вӑркаштарса каласа парасшӑн ӑмсанаҭ.

**Митта Петӗрӗ.**

---

# Кӗске йумах.

Манӑн йумахӑм ҫакӑн пек. Аслӑпатӑрйел районӗнђе Кивӗ Ахпӳрт йатлӑ йал пур, тет. Ҫакӑ йалта пушарсемпе кӗрекенсен ушкӑнӗ пур, тет. Ҫакӑ ушкӑн халӑхран йал ҫумне акмалли ҫӗр илнӗ, тет. Унӑн ҫине сӗлӗ акнӑ, тет. Сӗлли калама ҫук аван ӳссе ҫитӗннӗ, тет, Ӑна пӗтӗм етем ӑмсанса тӑнӑ, тет. Етемсем анђах мар, пӗтӗм кађака-сурӑхсем ӑмсаннӑ, тет. Вӗсем вара кашни кунах ҫав сӗлле ыталаса, ђуп туса, вӑйӑ выљаса кун иртернӗ, тет. Хӑш-хӑш ђухне ҫӗр каҫнисем те пулнӑ, тет. Вӗсене ҫак сӗлӗпе вӑйӑ выљаса ашкӑннӑшӗн никам та пӗр пуслӑх сӑмах вакламан, тет. Унтан вырма вӑхӑт ҫитнӗ, тет. Пӗтӗм етем, ватти-вӗтти мӗнӗпе хире вырма кайнӑ, тет,

Ҫак вӑхӑтра, ҫу каҫиђђен кађака-сурӑхсем туй тунӑ ана ҫине пӗр ҫын ҫурла ҫакса пынӑ, тет. Пынӑ тет те, куҫӗ-пуҫӗ веҫех тухса ӳкнӗ, тет. Мӗлке пек вӑрӑм ҫӳҫӗ шӑрт пек тӑрса кайнӑ, тет. Ђери шартах ҫурӑлса кайнӑ, тет. Унӑн куҫӗ умӗнђи ани ҫинђе пӗр шит сӗлӗ те пулман, тет. Хупхура ҫӗр анђах курӑннӑ, тет. Вара ҫак ҫын никам та ан куртӑр тесе, анкарти хыҫӗпе тӗк пек вӗҫтернӗ, тет. Вӑл ҫын ђисти пушарсемпе кӗрешекен ушкӑнӑн пуслӑхӗ пекех пулнӑ, тет. Халӗ вӑл ҫынна сӗлле пӑхманшӑн вирлӗ ответ тыттармалла, тет.

Йумахӑм вӗҫленђӗ, ӗҫне ревкомиҫҫи вӗҫлетӗр.

**Елуш Теветкел.**



# ПАХТА ХУРАҪИСЕМ

Ђей ĕçсе тарланă хыççăн шкул умĕнђи крыђт-сан карлĕкĕ çинђе тайăнса, хаçат хуђĕпе ђĕркен-се çăвар хупăлђийĕсен хушшине хĕстерĕннĕ ђы-карккинђен ункăн ункăн йасăрланса тухакан кăвак тĕслевлĕ тĕтĕме мăкăрлантарса тăнă шкулăн пуç-лăхĕ—Кĕркури Кĕпĕрйанђă.

Йал хушши лăпкă. Те урампа никам та иртсе çӳременрен, ахаљ ђух кайри урисен хушшине хӳ-рисене хĕстерсе „хамлатса" вĕрекен йытăсен сас-сийĕсем те пайан илтĕнмеççĕ. Калăн—йытăсем отпăскра, йе тен кану тăваççĕ тейĕн.

— Ыранлă-тепĕркунлă ирсенђе çĕнĕ вĕренӳ çул-не кĕретпĕр. Анђах çак пахђана кăштах тирпей-лемелле пулаť пуљ-ха унђђен... ытла та йал кул-лине йула пуçланă ку пахђамăр, тесе пăхса илђĕ Кĕпĕрйанђă хăй умĕнђе тăсăлса выртакан тĕрлĕ çимĕçлĕ шкул пахђийĕ çине.—Йухăнтарнă мĕн... хам кайнăрапа йапăх хуçасăрланса ларнă ку пах-ђа. Мур ађисене каласа та хăварнă... итлемен вĕт. Ав кĕрсе кайнă ĕнтĕ... никамран та расрешшени илмен вĕт çав, тесе ђылайђђен тинкерсе пăхса тă-ђĕ купăста йăранĕсен хушшинђе тĕлленсе çывăр-нă çĕртен siksе-тăрса йулхавлăн анаслана май, каркаланса тăракан 77 санттиметтăр тăршшĕ авăн-ђак майракаллă ула кађака çине.—Ĕнтĕ вăл кађа-ка... ну калăпăр, мĕн ăнланакан çын, то йеç, вы-ђăх вăл. Кађака айăплă мар ку ĕçре. Вăл кĕтӳре те ĕретлĕн хутшăнса çӳремест. Сурăхсем ăна йу-ратмаççĕ. Вара ирĕксĕрех кунта килсе кĕмелле пулнă унăн ыйтмасăрах килсе кĕнĕ вăл çавăнпа та... выртни çинђен каласан ĕнтĕ ахалех ăнлан-малла ĕнтĕ, ывăннăран вăл выртнă. Купăста пуçĕ-сем шултра. Конешнă, вĕсене çисе ывăнмашкăн меслет пур.

Ђыкарккине Кĕркури Кĕпĕрйанђă вĕрçĕнĕрен ђăркаса мăкăрлантарма пуçларĕ.—Çав мĕскерши тата... камши.. тесе куçĕсене илĕнми тĕлĕттерђĕ, çĕрулми йăранĕсем хушшинђе темĕскерсем йă-шăлтатса, хĕвел пайăркийĕн çутти ӳкнине çурăмĕ-сем йăлкăшса выртнине курсан:—Е-е-е... çăвăрĕ-сем иккен. Çăвăрĕсем амăшне ĕмеççĕ. Сысна ĕнтĕ вăл.

... Ав, унта хăйар йăранĕсем. Вĕсен йăранĕ те ђĕрђунсемсĕр илемлĕн курăнса выртма пултарай-мĕђђĕ вăл,—латнă ђăх ђĕпĕсем унта уткаланă май, кĕшĕлтетсе йурласа çӳреççĕ—савăннă, снађђăт. Йеплеха кунта килме пултарнă вĕсем... Та-а-а, терĕ Кĕпĕрйанђă,—инкупаттăрпа тухăннă ђĕпĕсем мар мĕн вĕсем,—амăшĕ пур. Амăшĕ йертсе килнĕ имĕш вĕсене. Шăтараççĕ... çийеççĕ хăйара. Тăрансассăн, йе йăлăхсассăн тен хăйсемех тухса кайĕç. Хурал-çăсем аван... аван сыхлаççĕ пахђана. Ерттелпех... çемйисемпех ӳркенмесĕр килнĕ. Кађака çех пĕђ-ђен мĕн, ну вăл çăвăрĕсемшĕн йĕрекен йăпала мар, хăйне тăранса пултăр, терĕ те Кĕркури Кĕпĕр-йанђă, çавăнтах йулхавлăн тĕпĕрĕлсе анђĕ. Гара хĕвелĕн ăшшипе витĕнсе лăпкăн çывăрса кайрĕ.

Ман калавăм çырăнса пĕтрĕ. Малалла каласа çырăнас сăмаха йулташ колхоçнĕке паратăп;—та-вай кала...

— Та-а... вăл ђăн ђăнласах çапла пулнă,—тесе сухалне шăлкаласа илнĕ çемĕн сăмахне пуçласа йађĕ колхоçнĕк.—Ку ĕç иртнĕ çулла пирĕн йалта пулса иртнĕ. Ну и кахаллăх пысăк тађђĕ ĕнтĕ пи-рĕн Кĕркури Кĕпĕрйанђђăн... Латнă хаљ ађисем, пионерĕсем тăрăшуллăн ĕçлетђĕç. Вăл канăç вăхă-тĕнђе уйри кăтартуллă кектарĕ, вĕренекенĕсем пулман пулсан çаплипех йухăнса пĕтсе çухалмал-лађĕ. Ăна нимĕн те мар... çапах тирпейлĕн пуç-таркаласа кĕђĕç. А, пахђийĕ вара—шкулăн пахђи-йĕ çу каçађђен выђăх-ђĕрлĕх хурри пулса, йурлă йухăнђăклă çанталăк патнелле çитмесĕр те тир-пейлĕ куна курайма рĕ.

— Çапах йур айне хăварман мĕн...

— Хăварман... каламастăп йур айне йулнă тесе... а, пĕлетĕниха мĕн пулнă хĕлле.

— Хĕлле, хĕллех пулнă пуљ ĕнтĕ... йур çунă пуљ...

— А, тоттă çав... йур çунă. Кĕпĕрйанђăсем йур çăвас умĕн пухкаласа илнĕ пахђа çимĕçсене шку-лăн тĕп сакайне хунă пулнă. Вăл кахалне пула пирĕн вĕренекен ађсемĕрсем те март уйăхсăр вĕ-ри апат çиме тивĕçлĕ пулайма рĕç. Пирĕн йалсо-вет пуçлăхĕ те çавнашкал пулнипе, вăл та ку ĕç-пе тăрăшса ĕçлемен.

Йĕркипех каласа пыраť колхоçнĕк. Кĕпĕрйанљ „караул" кăшкăрни çинђен те ђарăнса тăђĕ.

Март уйăхĕнђе вĕри апат орканисатсилес умĕн Кĕпĕрйанљ шкул тĕпсакайĕнђи ĕçми çимисене кĕр-се пăхма пикеннĕ пулнă. Анђах кĕрсе кайсанах „тамăк кăшкăрса" краву.. ул...латакан Кĕпĕрйанљ-ђăмăра вĕренекенĕсем аран-аран сĕтĕрсе кăларса, „пӳкле вилĕмрен" çăлса хăвараççĕ. Иĕпе сапаллă çанталăкра пуçтарса кĕрткеленĕ пахђа çимĕçĕ йăл-тах çĕрсе йейĕлсе кайнă пулнă. Йейĕлсе кайнă пулнă та, вĕсен ăшне аннă анманах пирĕн Кĕпĕр-йанђă йанах шăмми таран путса ларнă.

...Акă сана... куртăни, ĕçе вăхăтра хастарлăн пи-кенсе туманни мĕн кăтартаť,—тет сухал колхоç-нĕк.—Кăçал апла мар ĕнтĕ. Кĕпĕрйанђă туйса илђĕ ĕç йĕркийĕ мĕнле иккенне... хаљ пĕлет.

— Хаљ туйса илђĕ иккен апла.

— Туймасăр... выкăвăр темне те туйтарĕ... çит-меннине кĕлеткине тимĕр шапа йеверлĕ туса хаçа-та пиђетлесе кăларђĕç. А, хаљ Кĕркури Кĕпĕрйанљ-ђă хыçне вут хыпнă тейĕн. Хаљ вĕренекенсемпе пĕрле ĕçлесе ăшă путвал хатĕрлесе хуђĕç, кăçал пахђа çимĕçсене унта усраççĕ ĕнтĕ. Кађакасем сыснасем кĕрсе çывăрма мар—пахђа патне хаљ пырса та шăршламаççĕ, йĕри-таврах илемĕн кар-таланса çавăрђĕç. Ĕненмесессĕн,—пырса пăхмаш-кăн та пултаратăр... Çапла вăл тирпейлĕх. Ахаљ-тен мар пирĕн колхос тирпейлĕхĕшĕн, тата ĕçĕн тухăçлăхĕшĕн, хастарлансах кĕрешет.

**Митта Петĕрĕ.**

# Хура сӑнсене хӗрлӗ сӑнӑпа, хӗрлӗ сӑнсене—хӗрлӗ йалавпа.

## Прорыва кӗрсе ӳкнӗ.

Патирек колхосӗ „Хӗлхем" (Шӑмӑршӑ районӗ) тырпул пухса, кӗрес кампанинче тимӗр шапа утӑмӗпе утать. Ӗҫ тистсиплини начар пирки колхоҫнӗксем нумайӗшӗ ӗҫе тухмаҫҫӗ. Тӑккаланчӑкпа кӗрешес тӗлӗшпе нимӗн те тумасть.

Сотсиалисӑм ҫектӑрӗ
Патирекри „Хӗлхем",
Хӑҫан санӑн чипер тӑрӗҫ
Сотсиалисӑмлӑ ӗҫсем.

Ӗҫ вӑйсене вырна лартман,
Колхоҫнӗксем ӗҫрен йухаҫҫӗ,
Машшинсене те йусатман,
Тырпулсем пӗрмай йухаҫҫӗ.

Ак мӗншӗн санӑн ӗҫӳсем
Прорывалла кӗрсе ӳкеҫҫӗ.
Прорывӑн тӗксӗм сӑнӗсем
Сан „Хӗлхем" на пач сӳнтереҫҫӗ.

## Плана вӑхӑтченех тултарнӑ.

Вӑрманкассинчи Марҫҫелски йачӗпе тӑракан колхос (Шупашкар районӗ) прикатӑри ӗҫ вӑйӗсене тӗрӗс лартса, сотсиалисӑмлӑ ӑмӑртупа утарничӗствӑна сарса йарса, ыраша, планпа 10 кунта вырса кӗмелле пулнӑ пулсан 7 кунта пухса кӗнӗ.

Сотсиалисӑм ҫектӑрӗн
Сотсиалисӑмлӑ ӗҫсем
Ҫапла тусан ҫӳле тӑрӗҫ
Ҫӗршывӑн ӳсӗмсем.

Ӗҫ вӑйсене тӗрӗс лартса
Ӑмӑртупа хӗрсе,
Хирӗҫле плансем парса
Тухатпӑр ҫӗнтерсе.

## Кӗтсе ларащҫӗ.

Утӑ хатӗрлес ӗҫ калама ҫук йапӑх пырать. Ийулӗн 31-мӗшӗ тӗлне план 7,2% ҫеҫ тулнӑ. Сакотҫерно, Сойусспирт, Сакотскот, Сакотконч ӗҫ хӑй тӗлӗн пулса пырассине кӗтсе лараҫҫӗ.

Ватӑ пуҫлӑх сакотлаҫҫӗ
Кӗлӗрсе пӑхса лараҫҫӗ,
—Мӗншӗн утӑ пухӑнмасть
Опос килни курӑнмасть?

Пухӑнмасть ҫав, курӑнмасть,
Ҫаҫтӗрла кӗтсе ларатпӑр.
Колхоссем утӑ пухма
Ҫамӑрах тавай тытнатпӑр.

## Нимӗн те пулмасть.

„Сталинтсы" колхосра (Ҫӗрпӳ районӗ) комсомол йачейки секреттарӗ Порфирйӗв пухуран тарать. Члин кӗнеки улӑштарас тӗлӗшпе нимӗн те тумасть, вӑл ӗҫе тырпул пухса кӗрес ӗҫпе ҫыхӑнтармасть.

Парттин чӑн пулӑшаканӗ
Комсомолӗс пулмалла.
Ӗҫрен пӑрахса тараканӗ
Ҫана мӗнха тумалла.

Билет улӑштарас чух
Ку тарса ҫӳретӗн.
Ес комунис пулас ҫук.
Сӑвӑн питнах кӗҫҫе ҫӗлетӗн.

## Польшевикла ӗҫлеҫҫӗ.

Кивҫурткассинчи (Шупашкар районӗ) комсомол йачейки хӗрлӗ опос орканисатсиленӗ, йалхуҫалӑх налокне пухассишӗн, тырра кӗске вӑхӑтра вырсах пӗтерессишӗн кӗрешет.

Парттин чӑн пулӑшаканӗ.
Комсомол пулать вӑл.
Ӗҫре польшевикла тӑваканӗ
Прорывшӑн вутлӑ тӑвӑл.

Ак вӗсем опос хатӗрлеҫҫӗ,
Йалхуҫалӑх налокӗ пухаҫҫӗ,
Тырпула срукченех пӗтереҫҫӗ.

## Вӑхӑт пулман.

Чӑвашохотрыпаксойусӑн 1000 кролӗк усрамалла, 137 ҫеҫ усраҫҫӗ. Ма усрамастӑр тесен вӑхӑт ҫук, теҫҫӗ.

—Ма усрамастӑр?
—Вӑхӑт ҫук.
—Мӗн туса ларатӑр
Ку чух?
1000 кролӗк кирлӗ,
137 ҫеҫ.
Ҫаканшӑн сире
Пӗҫертмелле ҫеҫ.

**Тороней.**

## Ӗненместӗ.

Шупашкар районӗнче шкулсене йусас ӗҫ йапӑх пырать.



— Ачасем, пирӗн шкула ыран ремонт тума пуҫлаҫҫӗ.

— Ӗненместӗп. Йур ҫума пуҫламасӑр пулакан мар вӑл.

# Алăсăр — урасăр...

Хăй каланă тăрăх, йараплан çинђен ўксе аманнă вăл. Çавăнпа та уксах, ђăлах—алăсăр—урасăр. Сылтăм алли вырăнĕнђе çанă çех çакăнса ланђăртатса çўрет. Урисем иккĕшĕ те пур, анђах сулахай ури çине вăл пусаймасť,—„çўлтен хытă лађлатса персе аннипе" пĕç тĕпĕнђи мăн шăммисем шĕкĕлђенсе ларнă имĕш.

Вăл хапхаран пырса кĕнĕ ђухне Васса инкепе ывăлĕ шăналăк сарнă айтур çине тырă тийесе тăнă.

— Пăртак параймăр-щи хĕрхенсе..

— Пар, Петĕр, пар,—терĕ Васса инке. Петĕр пўртне ђупса кĕрсе капăртма илсе тухса пађĕ.

— Ăçта...армана кайма хатĕрленнĕ пуђха есĕр,—тесе капăртмана кавленĕ май, сăмаха пуçласа йађĕ алăсăр урасăр.

— Армана мар,— пасар пайан...çавăнта сутма илсе тухас тетпĕр.

— Вăрттăн сутатăр пуђ çав ĕнтĕ..

— Мĕншĕн... Колхос пасарĕ вĕт хађ. Епĕр кăна мар—пур ђленсем те пĕрле орканисатсиленсе тухатпăр,—тет Васса инке.—Çпекуђантсем ĕмĕтсĕрленсе хăпартса йанă тавар хакĕсене лађăрах хуçăнкăлантартăмăрха иртнĕ пасарсенђе...

— Пулĕ, пулĕ...анђах ан ман есĕ, тăхлађăм,—тет алăсăр-урасăр,—лайăх асăр-ха. Çак йапала вăл ырра мар. Есĕр çын хыççăн кайатăр.

— Вара епĕр ытлашшине çех сутатпăрçке,—тет инке.

— Çапла...çапла вăл—ăна пĕлетĕп.

...Хăй салтакра нушаланса çўренисене те йĕркипех каласа пађĕ алăсăр урасăр мĕскĕн çын. Вара Васса инке хĕрхенђĕ, хĕрхенсех ĕненђĕ ăна.

Вара йеплеха ĕненмĕн... Хăйин савнă мăшăрĕ Çинахви те çав вăрçăрах çухалнă вĕт—краштăн вăрçинђе. Тен кам кам пĕлет—Çинахви те çак çын йевĕрлех асаплă хĕн-хур тўссе çўренĕ пулĕ.

Колхос сутуилў çинђен пайанхи пуху ĕнтĕ висçĕмĕш сехет калаçаť:

— Хамăра хамăр раскулађђăт тăватпăр вĕт..

Нихăш сăмахне тавсăрса илсе, нихăшин тупсăмне те тупма çук.

Пуху кĕрлет... Калаçаť çăварĕ халăхăн. Претсеґаттĕл ăнлантарса ĕлкерейместь... Ăнланма килĕшмеççĕ.

...Вађукпа Çтаппан комсомолĕссем алăкран килсе кĕнĕ ђухне те халăх çавăн йевĕрлех кĕрлесе тăнă:

— Тинех выçă йулатпăр иккен...

— Йулатпăр, ĕнтĕ йулатпăр,—тет кĕтесре лараран Васса инке те.

— Йулашки çĕрулмине, йулашки тырра сутрăм вĕт епĕ.

— Йулашки мар пуђха та...

— Мĕн анкăминкĕленсе лăркаса ларан ес—тесе ђышрĕ пĕри хăй çумĕнђи сухала:—Йулашки темесĕр... Йулашки тес пулаť ăна кун пек ђух.

— Мана сăмах парăрха!—ыйтрĕ Çтаппан:—Йулташ колхосĕнĕксем, ĕçхресђенĕсем. Кунта епир мар... Çак пайанхи пухура пирĕн ђĕлхе мар, кулакăн ђĕлхи йейкеленсе сăмаха пĕр такăнми кунђалаť. Çав ђĕлхенĕн сийенлĕ тымарне пайан пирĕн комсомолĕссем тупса, хĕрхенўсĕр тăпăлтарса тăкрĕç.

Калаçакан Çтеппан çине куçĕсене илĕнми тĕллеттерсе тăраť халăх.

— Çавăн патĕнђе пурăннă-и вăл? Çавăн патĕнђе-и...—тĕлĕнсе кĕрлесе илђĕç харăссăн темиçе сасă,—Çтаппан алăсăр-урасăр çынна çпеккуђант Мирун патĕнђе мунђа кĕнĕ çĕртрен тытрăмăр,—тесе йевитленĕ хыççăн.

— Ђăлах та мари вара, уксах та мари...

— Ĕненмесен кайса пăхмашкăн пултаратăр.. Хађ йалсовет кĕнтселерĕнђе—Мирунпала иккĕшне те унта илсе пытăмăр.

— Еккей!—тесе лађлаттарса сурса хуђĕ, сĕтел патĕнђех ларакан Йехрем старик.—Ман карђăка йăлтах вĕт хăратса сехĕрлентернĕ.

— Вăл мана мĕн амакĕ кăна каласа хăратмарĕ пуђ,—тет Васса инке.

— Вăттак... ĕнен ăна..

— Çапла çав пире шăхăртаç...

* * *

„Алăсăр-урасăр" танкăлтатса çўренĕ етем, иккĕ çул кайалла хăйсен йалĕнђен хăваласа йанă кулакăн ывăлĕ иккенне—милитси топрос туса пĕтернĕ хыççăн уççăнах пĕлме пулнă. Кунта килсен вăл çпеккуђатси ĕçне йуратса ђунне пилленнĕ Мирун патĕнђе ерне ытларах хваттерленсе пурăннă. Алли те, ури те тĕп-тĕрĕсех пулнă унăн. Нимĕнле краштăн вăрçинђе те, нимĕнле йараплан çинђен те лађлатса ўксе аманма пултарайман вăл, мĕншĕн тесен краштăн вăрçи вăхăтĕнђе вăл çыртма йĕмпе ђупса çăвар хупăлђийĕсен урлă манка йухтарса çўрени унăн мĕтрињђĕски справкиурлă та аван палăраť. Пайанхи пасарта йĕркешерĕн ларăнса тухнă тĕрлĕ ĕçме-çимеллĕ колхосăн ларккисем ăна анђах,—унă картине кĕрсе пĕр кĕвĕпе ташлакан Мирунсенĕн ĕмĕђĕсене те халавлăн çĕклентерсе ăмсануллӑн хавхалантарма пултараймасť. Вĕсен çулĕ кивĕ—çĕтĕлнĕ çул. Вăл çул çине епĕр кранит сарса, унă тăрăх пурнăçăн çĕнтерўллĕ йухăмне çўлĕрен çўлĕ хăвăртлăхсемпеле шăвăнтарса пыратпăр.

* * *

— Çўретђĕр ĕнтĕ... антăрашђăр мĕн асĕсене килнине. Ларђăр ăçта кирлĕ вырăнта...тесе шакăлтатса калаçса пынă Васса инкепе ывăлĕ шыналлă урапа çинђе. Пасара кайаççĕ вĕсем. Вĕсен сийĕнђе вĕр çĕнĕ халат, пиншак вĕр çĕнĕ... сарă çĕнĕ шиплет, путтинкка урисенђе. Вăл йатуллă йапаласене пурне те хăйсен йалхуçаллăх протуксийĕсене сутнă укçапа копператтивран илнĕ.

**Митта Петĕрĕ.**

## Антранă йенне

Ишекри комсомолĕссем (Патăрйел рай.) çирĕмрен—вунулттăшĕ хуçалăхпа политтĕк кампанийĕсене иртернĕ çĕрте утарлă ĕçлес вырăнне „ођко" вăйипе ашкăнса ирттереççĕ.

— Хлихвун! Е, Хлихвун! Каллех çирĕм пĕр выђаран пулĕ ĕнтĕ... Çавăн пек туйăнаť.

— Çук çав... Çирĕм пĕр выђанă пулсан пулаťђĕ те... Çирĕм иккĕ пулни хупларĕ, шеремет!..

**Сайтсăв М. А.**

# Пуђах ăмăртăвĕ.

Мирун муђи прикатă пуçлăхĕ. Пĕлтĕр анђах ут вĕреннĕ пулин те тем те вуласа кăтартĕ.—Ман куç ђас шывланаť-хе, вăйсăр пули мур, итлесшĕн мар. Çак Макара темиçе те каларăм пит ăн çынсен пекки куçлăх тупса пар тесе, пулта-аймасť,—тесе хирĕç тăђĕ Макарпа Васси инке н патне пынă ђух хаçатне аллине кăмтарса айак а илсе кайса пăхса.

— Васси, на çакна вуласа пăх. Пĕлтĕр хут вĕреннĕ ђух таках манпа ват çынпа ăмăртаттăнђĕ, на та кирлĕ ку. Ну, Васси, сана ăмăртува ђĕ-етĕп.

— Есĕ пĕрре те ват çын пек мар, çаплах ăмăр-ас тетни?

— Е-е, епĕ вати? Ара пĕлтĕр анђах шкул вĕрен-ĕм пулаť те... Пĕлтĕр шкула кайнă ђух çиђђĕре улнă пулĕ,—терĕ те Мирун муђи, анђах çыварса нă пек куçне мăш-мăш выђатса илђĕ кулкаласа.

— Мĕнпе ăмăртатăн?

— Калама çук вашнă ĕçпе.

— Ну, пĕл?

— Вашнă ĕç. Çĕрулми кăларасси? Авăн çапасси? ырă патшалăха парасси?.

Ĕçсене каласа кайрĕ Васси. Мирун муђи „вăл ар“, „патнех пытăн“, „пĕлен-пĕлен“, „пулмарĕ“,— се кăшкăркаласа кăна лараť. Сайра хутран: ай-çавна пĕлместĕн, ăмăртимарăн манпа. Тырăпулă устарассинђе ђи кирли мĕн?—тесе кулкаласа лет. Хăй те вуласа çĕн йапаласем пĕлме пултар-нђен тĕлĕнсе савăнса илет.

— Кала, ват çын çапла каласаťи? Кала?—пĕлес лсе кайрĕ Вассин

— Ей, Васси, ђипер йумахла! Епĕ ватă пулсан ман ђĕре çамрăк. Ăстан пĕлен тен ман ђĕре çĕ çулхи ађан пек çамрăк,—кулђĕ хаçатне татах са пăхкаласа Мирун муђи.

— Ђĕре, ђĕре... апла сан ватти те сухалу анђах уђ, ђĕрў çамрăк, ўпкў-пĕверў...

— Акă пăх мĕн. „Тырă-пулă пуçтарас ĕçре тĕп тађ—тăккаланђăксемпе кĕрешесси пулса тăраť“— уласа тухрĕ Васси.

— Кунта мĕнпе ăмăртас тетĕн ара, Мирун Му-ă? Мĕн пĕрђĕн пуçтарас теместни?

— Тĕрĕс! Пĕрђĕшĕн, пуђахшăн кĕрешес пулаť. н йултăр полђшевиксен уйне пĕрђĕ, пуђах.

———

Пуху та пухăнса çитрĕ.

— Претçетатле пайан хам каласа тутартăм пуху. остановлени вуларăмăр пайан. Пĕлтĕр те ана не вăраха йарса ĕçленĕ пирки хĕп хĕрлĕ йулђĕ

— Ниђђаво, ниђђаво. Пăхха Томликассем ак-асăр вырса илеççĕ.

— Ан калаçкаласа тăр, Йăван. Есĕ ху та çум урăк, вĕлтренпе пĕрех. Ахађтен мар сана Вĕлтрен аванĕ тенĕ,—йĕке вĕçĕ пек шĕвĕр сăмсине вы-аткаласа илђĕ Васлей.

— Арпашкаласа тăмалли çук. Епĕ сире, пур рикатăсене, пуђах ăмăртăвне ђĕнетĕп.

Пуђах ăмăртăвĕ тесен тĕлĕннипе хăшĕ ним ка-ама пĕлмерĕç. Халиђђен пулман йапала. Кам хмаххи пуђахшăн ăмăртăва тухтăр. Пуђаха та ăхса тăђĕ тата!—Тимуш шăрђăкрах çын, йалан çе хирĕç тăма вĕреннĕскер, халĕ те тусеймерĕ.

Ун ђĕри çапла—хирĕç тăраť. Хирĕç тăмасан ĕç туман пек туйăнаť. Апат çиме ларнă ђух та хырăм пăркăђланă винттă пек пĕтĕрĕнсе выçсан та вăл малтан хирĕç тăраť—çиместĕп! тет. Хыç-çăнах ђĕлхине йăваласа çăтса йарасран та хăра-масť, çийет кăна.

— Есĕ хăва та пуђах! Ухмах, тупнă ăмăртмалли! Арăмупа ăмăрт ун пек пĕђĕк ĕçсемпе. Пайанах кайсан хуран кукли пĕçерме арăмупа ăмăрту то-кăвăрĕ тăвăр,—хут купăс меххи пек çамкине картлантарса, çăккăр тĕпĕ пек лапшака çавракa питне пĕрсе ахăрса кулса йађĕ Тимуш.

— Вот Тĕпком, Çĕрĕç кăмиссариађĕ йышăннă тăрăх... мĕн тери çухалаť пирĕн уйра тирпейсĕр, вăхăтра ĕçлемен пирки. Тăваттăмĕш пайĕ уйа йулаť: вырнă ђух, турттарнă ђух, çапнă ђух...

— Çинĕ ђух, тула кайнă ђух,—татах хирĕçлерĕ Тимуш.

— Тимуш! Вĕлтрентен те усал ес. Сăпсах вара.

— Ара ăна Сăпса Тимуххи тесе ахалтен кала-ман вара.

— Ђарăн, Тимуш! Мирун ђăнах та калаť. Патэ шалăха памаллăх тырă уйрах çухататпăр вĕт Тавай ђăнах ăмăртар. Пĕр пуђах та тырăлли ан йултăр. Тырă тăкакĕпе вăй хурса кĕрешес.

— Тусан лайăх çав.

— Хăтланса пăхатпăр та.

— Тăватпăр!

Мирун муђи хăйĕн ĕçĕ вырăна кĕнине кура хавасланђĕ.

Епĕ Васси прикатине ђĕнетĕп. Уйра пуђах хă-варассипе тырă тăкассипе кĕрешесси...

— Епĕ те Махала прикатине.

— Епĕ йышăнатăп Васлей прикатине, Тимуша уйрăмăнах...

— Тăкакпа кĕрешмелли ăмăртăва тухатпăри?

— Тухатпăр!

— Йунашар йалти колхоса ăмăртăва ђĕнес.

— Ай-ай, Вассипе пуђах ăмăртуне тухрăмăр-ха. Ну, Васси, сыхлан. Мана хăваламалла-и, ман сана хăваламалла-и?

— Йулмастпăр! Тăкака çĕнтерĕпĕр. Ăна епĕр çĕнтернĕ,—тавăрђĕ Васси.

Тепĕр уйăхран епĕ Мирун муђипе Вассийе çтена хаçађĕ çинђе карттăђкисене куртăм. Мирун муђи хуп хура тара ўкнĕ ĕçлет. Васси авăн çап-малли машшин умĕнђе кĕлте йарса тăраť. Вĕсен йне „Тырăпулă пуçтарас ĕçре тăкакĕсемпе хытă кĕрешекен утарнĕк—прикатирсем—Васси инкеп Мирун муђи“, тенĕ.

Н. Ђурп..й.

## „Капкăн“

## çитес номĕрĕ

## çулйĕр строиттĕлстви

## йађĕпе тухаť.



### Лӑпкӑ шухӑшпа.

Çул май хваттере кӗрсе выртмалла пулҫӗ. Колхос çул çӳрекенсем валҫи йатарласа тунӑ постойалӑй твора хваттере кӗнӗ çынсем пурте çывӑрнӑ вӑхӑтра епӗ кӗрсе тӑтӑм. Çывӑрма выртрӑм. Тултан çил шавлани, шалта çывӑракансем ыйӑх айӗн мӑкӑртатни илтӗнет.

— Кала: „а-а“ тесе!—тени илтӗнҫӗ малти сак çинҫен.—Кунне икшер кашӑк. Ухмах!

— Ку хвершӑл ӗнтӗ,—терӗм епӗ ку кам пулҫӗши, тесе шухӑшланӑ хыççӑн.

— Ырӑ кӑмӑлпа турра кӗл тӑвар!—тени илтӗнҫӗ çывӑракансем хушшинҫен тепӗр сасӑ. Кӑштах тӑхтасан çав сасах:

— Пӗрре. Иккӗ. Виççӗ... ку çӗмрӗкки шутра мар. Акӑ ку пӑсӑкки те хисепе кӗмест, терӗ пӗри ыйхӑ айӗн.

— Ку ӗнтӗ тийаккӑн, тесе хушӑшларӑм кун çинҫен.

— Тайош! Есӗр пире нийепле те хӑваласа çитместӗр. 120 проҫӑн! 130...

— Ку утарнӗк ӗнтӗ, — терӗм. — Сотсиалисӑмлӑ ӑмӑртаканскер...

Сасартӑк тепӗр сак çинҫен:

— Токкументсем ӑçта?—тесе кӑшкӑрни илтӗнҫӗ.

Ку сисмен çӗртен пит хытӑ каланӑ сасса илтсен, епӗ ирӗксӗрех сылтӑм аллӑма кӑсйене йатӑм токкументсем шырама. Анҫах пӑхрӑм та милитсионерӗ харлаттарать кӑна, никама та тӗртӗнмест. Ыйхӑ айӗн каланӑ вӑл кӑна.

Кӑмака çинҫен канлӗн сывласа çывӑракан сасӑ илтӗнҫӗ. Ыйхи унӑн пит лӑпкӑ. Нимӗнле тӗлӗк те курмасть. Вӑл кун тӑршшипех нимӗн те туман пулмалла. Нимӗн çинҫен шухӑшласа та пуç мимине ӗçлеттермен. Çавӑнпа вӑл халӗ пит канлӗ çывӑрать. Ку камши, тесе кӑмаки çине хӑпарсах пӑхрӑм. Хайхи çын Елме-касси (Шупашкар районӗ) йалсовеҫӗн тырпул хатӗрлевне туса иртерме хушнӑ ҫленӗ пулнӑ.

### Тунсӑхнӑ ӗмӗлке.

Епӗр çӗрле сопранирен тавӑрӑнатпӑр йӑмралла урампа. Кӑмӑллӑн калаçатпӑр. Васкамасӑр йухаççӗ ыванӑ шухӑшсем. Сасартӑк пирӗн хӑлхана хӑрушӑн улакан сасӑ илтӗнсе карӗ,

— Йытӑ!—терӗмӗр епӗр илтӗнекен сасӑран айаккалла тарса.

Патнерех пырсан, епӗр тӑватӑ ура çинҫе тӑрса уйӑх çине пӑхса улакан çынна куртӑмӑр.

— Ӳсӗр!—терӗмӗр епӗр малтанах, анҫах патнерех пырсан, çав уйӑх çинелле уласа тӑракан ӗмӗлкене шӑршласа пӑхсассӑн, урӑхла шухӑшламалла пулҫӗ пирӗн.

Çав ӗмӗлке çав йалти (Аслӑпатӑрйел) вулав çурҫӗн пуçлӑхӗ пулнӑ.

— Ухмаха йернӗ!—шеллерӗмӗр епӗр ӑна,—Ты пул хатӗрлевӗ пуçланнӑ майпа пӗтӗм вӑйран ленипе сисӳ шӑнӑрӗсем (нервы) татӑлса кайнӑ ӗн унӑн.

Çапах та çав телейсӗр „пуçлӑха“ пӗрик кур шыв ӗçтерсе, кӗлегки тӑрӑхӑн пӗр витре ш йанӑ хыççӑн, вӑл хӑйӗн хуйхӑллӑ повӗçне пӗтӗ пех каласа паҫӗ ним васкамасӑр. Ухмаха йем имӗш вӑл.

— Пӗлмесӗп—темӗскер килсе çакланҫӗ мана, тет мӗскӗнскер.—Тӗлӗнмелле йапаласем пулаç манпа. Çӳçсем кирлӗ мар çӗрте ӳсме пуçларӗ Шӑлсем кашкӑр шӑлӗ пек асав ӳссе карӗç. Кал сан та ӗненмӗр... хӳре ӳссе ларҫӗ.

— Менле хӳре?

— Мӗнле хӳре пулать. Хӳре хӳрех ӗнтӗ вӑл тилӗн йе кашкӑрӑн пекки. Вутсыппи пысӑкӗ Прӳкки ӑшне ҫиксе нийепле те пытармалла ма Халӗ тата пушшех тискерленсе карӑм. Ларатӑ ларатӑн килте, çав тери скушнӑн, киҫемӗн туйӑ са кайать вара манӑн пурнӑçӑм. Упа пек ура т панне çуласа выртассӑм килекен пулать. Вара а транипе урама тухатӑн та уйӑх çине вӗрме тыт натӑн. Ҫун кӑштах лӑпланать вара.

Епӗр ӑнланса илтӗмӗр вара унӑн полошенин Çын вӑл хӑйӗн куҫтсут ӗçне лартма пӗлменре çавӑн пек тиккарланса кайнӑ. Тӗрӗссипе каласа вуламалли çуртра куҫтсут ӗçӗсем çук пирки ти карланса кайнӑ (хӑй вулав çурҫӗн пуçлӑхӗ).

Хӑй айаплӑ—никам та мар.

### Кӑшӑл кирлӗ.

Елӗк районӗнҫи Тукташа кӗтӗмӗр. Урампа пы ҫухне, хуйхӑлӑн утса пыракан арӑма тӗл пултӑмӑ Вӑл тимӗрçе тӗл пулнӑ та çапла калать:

— Тимӗр кӑшӑл туса парха мана тархасшӑн,—те

— Мӗн тума тимӗр кӑшӑл кирлӗ пулҫӗ сана?

— Упӑшкам валҫи.

— Упӑшку валҫи?—тӗлӗнҫӗ тимӗрçӗ.—Мӗн тӑв вара вӑл унпа?

— Питӗ кирлӗ вӑл ӑна. Мӗн .. тӗрӗссипе калас кӑтартсан, самӑрланма пуçларӗ халӗ вӑл. Самӑр ланать те, самӑрланать, нимпе те ҫармалли çук.

— Унишӑн мӗн хуйхӑратӑн. Савӑнмалла çеç.

— Савӑнмалли нимӗн те çук. Манӑн упӑшкан кравать те тӳсейми пулҫӗ. Выртсассӑнах, йӑвӑ пирки, ишӗлсе анать.

— Авӑ мӗнле.? Мӗн пирки апла пулнӑ?

— Ӗçлемесӗрех пурӑннӑ пирки. Тырпул хатӗ лев камппани пуçланнӑранпа нимӗн те халӑх ӗçн туман. Вулав çурҫӗ 4 уйӑх хупӑ ларать. Упӑшкам кӑшӑл хывас тетӗп. Ытлашши самӑрӑлса кайн пирки хырӑмӗ çурӑлса кайӗ тата. Хӑрамалла, тет

Хӗрхентӗмӗр епӗр вулав çурҫӗн пуçлӑхне т унӑн арӑмне. те вулав çуртне çӳреме йуратака йалти кр штӑнсене те.

# Утакан пиђӗкесем.

Тăвата пиђӗке урампа пыраççӗ. Тăвата пиђӗке. Пӗђӗккех мар хăйсем.

Тӗплӗн сăнаса пăхнă хыççăн çак уралла, утакан пиђӗкесем ђăваш тӗп аслашшӗсем тыткаланă сă ра-ерех пиђкисенђен 10 хут ђăтăмли курăнаť: шултăркамаççӗ. тата нормăран тулса иртмесен йухассинђен те хăрамалла мар.

Копператтив тӗлне тулман пиђӗкесем хырăмӗсене шăмпăртаттарса çитсен, кӗрхи шартлама сивӗре аптранă выçă кашкăрсем йеверлӗ, çăварӗсене карса хайаррăн çухăрса йађӗç.

Хăйсенђен, çывăха пыма çук, пăнтăхнă çӗпре шăрши çапаť Копператтив умӗнђе тӗлӗнсе пăхса тăракан урă çынсем пӗр сăмах ђӗнмесӗрех çул пађӗç.

— Ерех ӗçме паккал пар.. на ак укçа сана!— кăларса çапрӗ лутра та сарлака пиђӗки хăй кăсйинђи мӗн пур пек пăхăр кӗмӗлӗсене тăран прикаш ђӗк умне.

Вăрăм та шӗвӗр тӗплӗ паккала хул хушшине хӗстерсе урам варринђе ларакан хăрăк улма йăвăççи айне хуçланса ларђӗç. Умӗсенђе паккал, тулли çурлиттăрсем...

Акă çӗрçăташӗ! Пиђӗкесен ăшӗнђи шыв-шур (йӳçсе курнаť) 60 атмосфер вăйӗпе тапнине пиђӗкесен мехханисăмӗ те тӳссе тăраймарӗ. Хуран çивитти манерлӗ хулăм та йăвăр тута хупписем çӗкленсе, шалтан кӗрпе шӳрпи пек пăтранђăк шывшур шарăлтатса йухса тухрӗ.

Тепӗр кун.

Хӗвел çăмăр пӗлӗђӗ айӗнђен йухса тухнă вăхăтра тăвата пиђӗке те вăраннă.

— Ах, пуçа!..

Пуçӗсем вӗсен арман ђул айне хурса хӗстернӗ пекех ыратаççӗ. Мухмăр çийет. Анђах мухмăра сӗвӗртекен имçам пӗр тумлам та саппасра çук.

Сарлака та лутра пиђӗкеку тапхăрта та аптрамарӗ:

— Итле, Пурххан... мухмăр ђӗртмесӗр йаснă ђăтма пулмасť... Но... шалиш! Пайан иккӗнех кайатпăр.

— Тупайăпăри пайан? Ӗçсе пӗтмерӗши ӗнер?— хăравăççăн ыйтрӗ леш.

Лутра та сарлака пиђӗке урăхран ђӗнмерӗ. Сулахай аллипе хӗввинђен 7—8 странитсăллă варланђăк çписка туртса кăларђӗ те, сӗтел çине çатлаттарса çапрӗ.

— Налок çписки пирӗн алăран вӗçерӗнмен вӗтха.. Акă Лев Аккимăђ. Акă Проккопийӗв Йакур... Инçе те кайас мар—Митта... Антрей Ваççилђ.. Мархва инке.. Мӗкӗте Краснух та... Вӗсем ђăтăмлă сретђаксем, йе кулакли те пур (Аккимăђ). Епӗр вӗсенђен пӗр тумлам та ӗçмен никакха. Çапла мари? Кайатпăр çавăнта!..

Йулашки сăмăхӗсене ђӗвен тăрсах çухăрђӗ лутра пиђӗке,

— Ма апла, Мӗкӗтерен çителӗклӗ ӗçнӗ ӗнтӗ. Хурат Мӗкӗте çинђен „крепки" сăмаха, „сретђак" анђах пултăр.

— Апла тăк Лђавкканне те хуртран 17 килокрам анђах тупăш курнă тесе лартас. Пушђай ытти 170 килокрамӗ ан курăнтăр. Уншăн пӗтӗм хӗл ӗçме пулаť,—хушрӗ Тимă.

Унтан хăйсене кăмăл тăранађђен ӗçтернӗ ытти çынсене те „ђухăнлатрӗç".

— А Миťтана ӗçтерменшӗнех сашиттăђнăй çине кӳртес.

Карттин ернипех çав майлă тăсăлнă.

Çапла ашкăнђӗ Шетмӗри (Йӗпреç районӗ) налок комиссийӗ. Йалӗпе илсен темиçе пин тенкӗлӗх тупăш пытанса йулнă. Анђах, йалсовет çав ирсӗрлӗхпе тӗрӗсмарлăха курса тăрса та, çăварне шыв сыпса йулђӗ.

**Çенин П.**

---

## Вăрçăллă турăсăрсем союсӗн Шăмăршă райсовӗђӗнђе




— Ик уйăх ӗнтӗ çапла ларатăп. Сайом çырăнма килекен пикам та çук.

# Ёмĕт таталҫĕ

**(Пуп каласа пани)**

Ийуҫ уйăхне васкасах хăваласа йарса епĕ пурнакан йала та 32-мĕш ҫулхи авкуст уйăхĕ килсе кĕҫĕ Савăннипе ним тума аптăрарăм. Ларас та тăрас та килмест. Савăнăҫ пĕтĕм ăшҫикĕмĕ кĕрсе тулҫĕ, йунтымарĕнҫе йунпа хутăшса ҫупа пуҫларĕ. Шалт аптрарăм. Кун пек савăнсан вилсех выртăн,---хăраса ўкрĕм епĕ.

Сасартăк, алăка йари уҫса, арăм кĕҫĕ пўрте.

— Ех, арăм, савăн!—ҫухăртăм пĕтĕм пўргҫурта ҫĕтрентерсе.

Унтан арăм патнелле кашкăр пек сиксе ун ĕнси ҫине хăпарса лартăм... Ах... Лараймарăм ҫав. Арăмпа иксĕмĕр те урайне кĕрĕслетсе антăмăр.. Ҫат! турĕ, урай йепле тўсрĕши вăл?... А, ман ҫăвар тўсеймерĕ хут-а-а-а-х-х-х!—тесе илҫĕ виҫĕ хут. Ҫур сехетрен тин тăн пырса кĕҫĕ пуҫăма. Арăм ман умра хуйхăллăн тăрат. Ҫамкисене йунпа сăрлана хăй (ўксе).

— Ҫакăн пек савăнтаратни ес мана? Арăм, савăн!—тесе ҫухратăп малтан!

— Ееехх, йатлаҫса карĕ арăм,—Ăҫта тарнă санăн ăс, йе ҫўлти патшалăха вĕҫсе карĕ?

— Арăм, пушалăстă каҫар! Савăннипе аптрарăм епĕ. Ҫавăн пирки пўлĕнҫĕҫке ку ĕҫ. Пĕлетни, харпăрҫăксем тыррисене ҫапса пĕтерҫĕҫ. Колхоҫнĕксем те авăн пĕтерсе ҫылай тыра авансна валеҫсе илҫĕҫ ĕнтĕ. Тыра!... кашни колхоҫнĕк йетинолиҫнĕкĕнех тырă нумай хаҫ!...

Сасса пĕлĕт ҫинҫи шур сухаллă ватă „тур„ патне ҫитех хăпартса ҫухăртăм епĕ:

— Ҫавăнпа та пирĕн пĕр минут та ҫывăрмалла мар!

— Ах, ҫывăрмалла мар... Пĕр минут та пĕр минута ҫывăрмасăр йепле ҫăтан?—аптратат арăм.

— Ех, айван та ҫке есĕ, арăм,—йатла пуҫларăм маттăшкăма,—колхос пасарĕнҫе ытлашши тыррисене сутса пĕтереҫҫен хресҫенсенҫен тырă пуҫтарас... слушит тунăшăн. Пуйатпăр вара, тырăран ех, пуйатпăр!...

Кун хыҫҫăн,—ыран ирех йалсем тăрăх ҫўрес. „Тырă саккоттовккине 100 йе 150% пурнăҫа кĕртессишĕн кĕрешес"—тесе постановлени йышăнтăмăр арăмпа иккĕн.

* * *

Ирхине ирех тырă пуҫтарма лав тытрăм. Малтанах прихутра ҫи айакри йала Кайри-кассине вĕҫтертĕмĕр. Кунта мушиксенҫен тырă тăпăлтарса илме ăнсатрах, тесе ҫул тăрăшĕпех шухăшласа пыҫĕ манăн пуҫ. Акă йала та ҫитрĕмĕр. Хĕрĕнҫи, килĕрен пуҫлас. Хапха уҫăлмарĕ. Мĕн хăйамаҫĕ. Ма кăнтăрлах питĕртĕр хапхана—тўсейменнипе арҫурилле ҫухăрса йатăм. Унтан пĕр кўсем тупса хапхана кĕрслеттере пуҫларăм. Шаккасан-шаккасан пĕр вăтам ҫула ҫитнĕскер, хапхине уҫса йаҫĕ. Вăл тўрех мана кăкăртан йарса илҫĕ.

— Мĕскер ҫĕмĕретĕн есĕ? Ўсĕрĕлтĕн штолĕ—хапхана ҫĕмĕретĕн?—тесе вăрсса тăкрĕ.

— Та... тырă пуҫтаратпăр... Ҫĕнĕ тыра... слушит тунăшăн...

— Ха... слушит тунăшăн. Кулаксемпе клас тăшманĕсемшĕн слушит тунăшăни?! Нумай пулмаст кунта хулари шефран рапоҫҫисем килсе карĕҫ. Вĕсем кăҫалхи тырпул хатĕрлевĕ ҫинҫен лайăх ăнлантарнă хыҫҫăн пирĕн йал тырпул хатĕрлев планне срукҫенех тултарҫĕ. Пуху: пупсене пĕр пĕрҫĕ тыра та памастпăр, тесе йышăнҫĕ. Ун вырăнне ҫĕнĕ сайома ытларах ҫырăнатпăр колхос сутуилĕвне вăйлататпăр!—тесе йышăнҫĕ пирĕн йал, ҫаплах тăват,—илтетни?.. Сире ваҫҫи пĕр пĕрҫĕ те ҫук!...

Куна илтсен пĕтĕм ҫўҫпуҫ вирелле тăҫĕ. Ҫĕркуҫҫи шăнăрĕсем ҫемҫелнипе ҫут ҫеҫ ҫĕре шуплатмарăм. Виҫĕ минут пĕр тĕлтех хытса тăтăм. Ни ура, ни ала хускалмарĕ. Аран—аран урапа ҫине пырса лартăм.

— Ну, тепĕр киле кĕмеллеи?—ыйтат лавăҫ.

— Каккуй ҫорт (ей, турă, каҫарах ҫорт тенĕшĕн) кĕмелле!.. Вĕҫтер киле!.. Хытăрах!... Куҫ ан куртăр ку йала... Халăх ухмахланҫĕ. Ăҫта унăн ăс? Патшалăха памалли тырра тахҫанах, срукҫенех парса татнă, а мана хыҫҫăн парса татаҫҫĕ вĕсем, е?—ҫилĕ килсе ҫигнипе лавăҫа кăкăртан тытса силлерĕм.

— Ес аплаи? Мĕншĕн пĕр айăпсăр тыллатăн?... Турăран та хăрамастăн? Айта йурĕ. Турă хăваҫĕпех ҫит есĕ йала!—тесе, урапа ҫинҫен ҫăмхана ыватнă пек ыватрĕ мана лавăҫ. Таса хире утăмпа виҫсе аран ҫитрĕм киле. Ҫитрĕм те тўрех урайне йăванса карăм.

— Ех, ёмĕт таталҫĕ... Ҫурмаранах шăтăртатса таталҫĕ ёмĕт. Ҫиркўне те хупасшăн халăх...

Ик-виҫ карҫăк ҫеҫ ҫўреҫҫĕ ҫав! Телей ăҫта ес, телей? Ăҫта ҫухалҫĕ ёлекхи ырлăх? Ман ҫине хаҫ ҫавăрăнса та пăхмаҫҫĕ. Йепле ирттерес талăк? Йепле пурăнас?

Р.Ҫ. «Хĕрхенетĕн» сана, пуп. Санăн пурнăҫсем наҫарланҫĕҫ. Халăх сана тырă памаст пулсан есĕ малашне тата ансатрах пурăнма вĕрен. Ҫветтуй сывлăшĕ тăрантарат пуҫ сана? Вăт ҫавна ҫăта-ҫăта пурăнма пултаратăн вĕт. Тата мĕн кирлĕ сана?

**Вĕ амин Туртуш**



**— Епĕр хамăр ҫинҫен ыйту лартатпăр. Сўтсе-йавма пĕтĕм ĕҫхалăх массине ҫĕнетпĕр!**

# Есӗр ӑҫти ђӑвашсем

Санран ыйтмастӑп, есӗр ӑҫти ђӑвашсем тесе, хисеплӗ вулаканӑм, анђах ҫак ҫынна палламашкӑн фелейтонӑн вӗҫне ҫитиђђенех мавпа пӗрле утма ђенетӗп.

— Претҫететтӗл Аниҫимӑв пури?—ийулӗн 17-ш кунӗнђе кӗнђелере кӗрсе тӑрсан ыйтрӗ Шӑхасантан пынӑ партйађейккӑ ҫыруҫи Миххайлӑв.

— Ҫук.

— Ӑҫта кайнӑ?

— Килтӗ пулмалла.

Ирӗксӗрех килне каймалла пулнӑ.

— Ӑҫу (претҫетаттӗл) пури.

— Йох,—Аниҫимӑвӑн ывӑл ађи пӳрнипе ҫӑварне пӑтраткаласа пӗр сӑмах пађӗ.

— Ӑҫта кайнӑ?

— Йох,—ответлерӗ ађа. Ийулӗн 18-мӗшӗ.

— Претҫетаттӗл кунта-и?—райӗҫтӑвком упполномођӑннӑйӗ кӗнђелере кӗрсе тӑрсан ыйтрӗ.

— Ҫук!—ответлерӗҫ ҫыннисем.

— Ӑҫта вӑл?

— Таҫта.

— Мӗн таҫти, ӗҫкӗре пулмалла—ђӑтаймарӗ пӗри ҫӑварне.

— Ӗҫкӗре?!—тӗлӗнсе ыйтрӗ РИК упполномођђӑннӑйӗ.

— Конешнӑ ӗҫкӗре, — ӳркенмерӗ ҫирӗплетме тепри.

Ӗнерхи кун ӗнерех иртнӗ ӗнтӗ вӑл, пайан ийулӗн 19-мӗшӗ.

Ҫавӑнпа та Аниҫимӑв ирех кӗнђелере ҫитсе сӗтел хушшине кӗрсе ларнӑ. Анђах Аниҫимӑв куҫне пӳлӗмри ђипер вырӑнта тӑракан пукан, сӗтел шкапсемех тайӑлса кутӑн утнӑн курӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та Аниҫимӑв хушӑран какӑрса йӳҫӗ какрӑш йулашкине пыр тӗпӗнђен кӑларса суркалаҭ.

— Ой, кам ҫав, ха портфӗлпе, е-е-е пӗлтӗм, каллех ман пата, епӗ таратӑп, есӗ „килте ҫук, ӗҫпе кайнӑ те“,—ҫыруҫине приккасласа урнӑ йыттa хыҫалтан пӑшалпа пенӗ пек килкартине ђупса тухса карта урлӑ сиксе тепӗр ҫын килкартинђе ҫухалђӗ Аниҫимӑв.

— Сывӑ-и, каллех претҫетаттӗл ҫуки?—Миххайлӑв й-ш каллех йалӗҫтӑвкома ҫитрӗ.

— Ҫук,—татса пађӗ ҫыруҫи.

— Апла пулсан есӗ халех Аниҫҫимӑва тупса кил, тупмасӑр ан кил,—хушрӗ Миххайлӑв ҫыруҫине.

— Килтех, анђах вилес пекех сывӑ мар, аран аран хашкаса вырттаҭ,—тепӗр 20 минутран кайалла ҫитнӗ ҫыруҫи раппӑртларӗ Миххайлӑв умӗнђе.

Ирӗксӗрех ҫитменнине Аниҫҫимӑвсӑрах йалӗҫтӑвком йулашки политтӗкпа хуҫалӑх кампанийӗсене пурнӑҫа кӗртсе пынине тӗрӗслемелле пулђӗ.

Тӗрӗслесен—5 ҫуллӑхӑн 4-ш татӑклӑ ҫулӗ сайом 7590 тенкӗ салатмалла, анђах пӗрне те алӑ пустарса вИҫӗ пус та пуҫтарман. Ҫу 2,5 ђентнӗр те 1,51 килокрам, 25850 ҫӑмарта пухӑнни пухӑнманнине ҫыруҫи те, кӗнђелерти кӗнекисем, пукансем, руђкӑсем кӗнђелерте пурӑнакан пӗр таракан те пӗлмеҫҫӗ.

Ҫӑм 163,83 килокрам пухмаллине никам та пӗлмест. Пӗр РИК-ран килнӗ отношшени ҫех калама хӑраса шкапра выртаҭ.

Аш-какай 31,19 ђентнӗр патшалӑха парас тӗлӗшпе 13 сурӑх пӗр картана пухса хупнӑ та, 2 сурӑхӗ „вӗҫсе“ тарнӑ. Те сурӑхсем ҫунатлӑ пулнӑ, те кӗнђелертисен пырӗсем ҫуланӑ. Халӗ ку ӗҫе милитси аллине панӑ та, анђах Канаш районӗнђи милитсисемпе ҫлетстви оркӑнӗсем Совет сойуҫӗ сут ӗҫне аван иртерекенсене парнеленӗ вӑхӑтра „Капкӑн“ парнине илесшӗн кӗтсе пурӑнаҫҫӗ пулмалла.

— 17—18-мӗш ђисласенђе есӗ, Аниҫҫимӑв, ӑҫта пултӑн?—тесе ыйтсан,—ӗҫме кайнӑ пулӗ, тет.

Есӗ ху ӗҫнине пӗлместӗни тесе ыйтсан, ӑҫтан пӗлетӗн, тет.

Есӗ кӑҫти ђӑваш пулатӑн Аниҫҫимӑв й-ш?

— Пер-и.

— Сер-ҫав.

— Пӗр Канаш районӗнђи Ҫӗнђолкас йалсоветђӗн претҫетаттӗлӗ Аниҫҫимӑв й-ш.

— Аха, апла еппин, паллайман пулӗха сана Ӗ.Х. Инспексинђи й-шсем.

**Соловйов—Сӳпенке.**

# Ывӑнакан

Кавалти ирӗклӗ ушкӑнсен йађейккисем нимӗнле кампанийӗ те хутшӑнмаҫҫӗ.



— **Мӗн пирки ес ырханланса кайнӑ?**

— **Ара, ырханланмалла ҫав. Ӗҫ нумай. Виҫӗм ҫул авкуст уйӑхӗнђе пӗр саҫҫетани тунӑђӗ, пӗлтӗр те саҫҫетани тунӑ, кӑҫал та саҫҫетани тумалла пулаҭ.**

# Телейсӗр Ҫтаппан.

Ҫын темиҫе тӗрлӗ ӗҫ (ремесле) пӗлме пултарать, ҫав вӑхӑтрах пӗри унӑн йуратнӑ ӗҫӗ, ӑна пурӑнма мел паракан ӗҫ пулса тӑрать. Ӑна ҫынсем профеҫҫи теҫҫӗ. Профеҫҫи темли те пур вӑл: тухтӑр, иншенер, уҫиттӗл, акроном, йут кӑсйасене тӗрӗслекен. коппературивсенҫе йӗке-хӳре слушпине тӑвакан, т. ы. те. Профеҫҫи кашни ҫыннӑнах пулать. Хӑшӗ ҫамрӑклах мӗнле те пулин профеҫҫийе алла ҫавӑрса илет, хӑшӗ ҫылай ҫула ҫитиҫҫен татӑклӑ профеҫҫи тупаймасть. Ҫакнашкалах ҫылайҫҫен пурӑнҫӗ Каптӑрма Ҫтаппанӗ те.

— Мӗнле есӗ, Ҫтаппан тус, пӗр профеҫҫисӗрех пурӑнатӑн? Хуть сан тухтӑра тухма вӗренес пулать, терӗм епӗ ҫакна пӗрре.

— Кирлӗ мар тухтӑр тавращӗ, вилнӗ ҫынран пит хӑратӑп епӗ, терӗ вӑл мана хирӗҫ.

— Апла пулсан выҫӑх тухтӑрне вӗрен, терӗм епӗ ӑна.

— Ай, ай, аван канаш парасшӗн есӗ мана. Тытӑнха емелллеме мӗнле те пулсан купарҫине ывӑтма вӗреннӗ лашана, тапса йарса хырӑмна йӑтса антарӗ, йе тытӑн совхосри 15 пӑтлӑ сысна-сене емелллеме урӑна пӗҫҫу таранах ҫыртса татӗҫ, терӗ Ҫтаппан мана килӗшмесӗр.

—Йиншенер-строиттӗл пулма та кӑмӑлламастӑн-и? тесе йытрӑм епӗ унтан.

— Хӑвах пул, аҫу-пӑҫусене пулма сӗн. Есӗ мана вилӗм ҫитмесӗрех вӗлересшӗн. Халӗ 7-8 еташлӑ ҫуртсем тӑваҫҫӗ, хӑпарса кайса пӑхха ҫи ҫӳлти ететашне. Пуҫу ҫавӑрӑнса кайса пуҫхӗрлӗ татӑлса ансан, ӳкнӗ ҫӗре тӗсӳ ге йулмӗ, терӗ вӑл ҫӑннипех ҫиленсе кайса.

Ҫылай йумахларӑмӑр унпа профеҫҫи йышӑнас пирки. Нимӗнле профеҫҫипе те килӗшесшӗн мар, Хӑшӗ хӑратать ӑна, хӑшӗ уншӑн йывӑр пек туйӑнать.

— Апла пулсан трактӑрис пул, унта ларса ҫеҫ ҫӳремелле, вӑл йывӑр ӗҫ мар, терӗм епӗ йулашкинҫен.

— Трактӑрис та пулмастӑп, вӑл та кирлӗ мар. Хӑшпӗр вӑхӑтра трактӑриссен ҫывӑрмасӑр ӗҫлемелле пулать, епӗ тӑранах ҫывӑрмасӑр ҫӑтаймастӑп.

Пойет, йе писсаттӗл,—вот ку ман ӗҫ. Ӗҫӗ йывӑр мар, ҫаплах ҫапа тухма пулать. Пӗрик сӑвӑ ҫырсанах хаҫатра, йе шурналра сӑнна ҫапса кӑларӗҫ, вилсен памӗтник лартма пултараҫҫӗ, терӗ Ҫтаппан кулкаласа.

Ҫак калаҫу пулни ҫултаӑк ҫитнӗ ҫӗре, манӑн татах курнӑҫмалла пулҫӗ Ҫтаппанпа.

— Ҫавашсен паллӑ писсаттӗлӗ Ҫтихван Каптӑрмински,—терӗ вӑл манпа „сторовӑ“ туса алӑ парса.

Пӗтӗмпе тӗлӗнсе хытса кайрӑм Ҫтаппана пӑхса: ҫӳҫне кӑткаслантарса курак йӑви йеверлех туса йанӑ, хул хушшинҫе темиҫе тӗрлӗ кӗнекесем, тетратсем.

— Санӑн хушамату „Каптӑрми“ тенӗ пек астӑватӑп, йепле тата есӗ Каптӑрмински пулса тӑтӑнха? Тата хӑҫантанпа ҫӳҫне турама пӑрахрӑнха?— терӗм епӗ ӑна.

— Ех, неопрасовӑннӑй етем, нимӗн те туймастҫке! Майакковский, Коркккий, Каптӑрминский.. Неушли халӗ те сисместӗн? Тата ӗлӗкхи паллӑ писсаттӗлсем мӗнле ҫӳҫлӗ пулнине аса илсе пӑх, сӑмахран: Пушкина, Кокӑле, т. ыт. те. Вӗсем пурте лапсӑркка пуҫлӑ пулнӑ. Хӑшпӗр ҫамрӑк писсаттӗлсем пӗр сӑвви те ҫапӑнса тухман пулсан та вӑрӑм ҫӳҫпе ҫӳреҫҫӗ. Сӑмахран, Мухмӑр Улатимӗрӗ йаланах ҫӳҫне вирелле тураса кӑткаслантарать; манӑн по крайни мер пӗлтӗрех пӗр сӑвӑ „Пӑр тапранҫӗ“ аҫманахра ҫапӑнса тухрӗ, конорарне те 45 пус ҫавӑнтах илтӗм. Пуҫа лапсӑрккалантарассине хаҫхи писсаттӗлсем мотӑ вырӑнне шутлаҫҫӗ. Ҫтихван Каптӑрмински писсаттӗлсем сӑнлӑ пулса ҫӳреме тивӗҫлех пулӗ тесе шутлатӑп, тесе хуҫӗ мана хирӗҫ Ҫтаппан.

Ҫапла калаңӑ хыҫҫӑн, нумай йумахласа тӑма хӑйаймасӑр‘ уйӑрӑлса кайрӑм Ҫтаппанран.

Нумай вӑхӑт иртмерӗ, манӑн татах Ҫтаппана тӗл пулмалла пулҫӗ. Ун ҫухне вӑл колхосла пасарта. Темле ыйту пирки унӑн хӑйар сутакан колхоҫнӗкпе тавлашу тухса кайнӑ.

— Неопрасовӑннӑй ҫӑваш, паллӑ писсаттӗл Ҫтихван Каптӑрминскипе калаҫма пӗлместӗн!—тесе вӑрҫмаллипех вӑрҫать ку колхоҫнӗке.

Аран лӑплантартӑм кӑна пасар урамӗнҫен илсе тухса.

— Мана пурте пӗлме тивӗҫлӗ, манӑн сӑвӑ аҫманахра ҫапӑнса тухнӑ, тата ҫырма палӑртса хуни

## Хӑйар тӑварлакансем

Тӗпрапкоп хӑйар тӑварлама шыв „Колхоҫнӗк ҫуртӗнҫен“ гасамарлӑхсем Атӑла йухса тухнӑ ҫӗртен илет (каналисатси трупи айӗнҫен).



— Ма шывне тасамарлӑхсем йухса тухнӑ ҫӗртен илетӗр?

— Илмесӗр. Хамӑра ваҫҫи мар вӗт хӑйарӗ. Копператтив ҫленӗсене сутмалли.

çĕр сăвва йахăн пур, палламаншăн çил килет, терĕ вăл лăпланса çитсен.

Çакăнтах сисрĕм Çтаппанăн пуçĕ ĕлĕкхинçен урăхланма пуçланине.

Утрăмăр урампа калаçкаласа (ĕçĕ Самарта пулнă), ОКИС макаçăнĕ тĕлне çитсен манăн йулташ çупсах кĕрсе кайрĕ макаçăна. Епĕ те кĕтĕм ун хыççăн, вăл мĕн сăлтавпа кĕнине пĕлесшĕн.

— Сирĕн макаçăнра çăвашсен çаплă писсаттĕлĕ Çтихван Каптăрминскин сăввисен спорнĕкĕн 219-мĕш томĕ пур-и?—терĕ вăл прикашçĕк умне пырса.

Прикашçĕк çылайçен Çтаппан çине тинкерсе пăхса тăçĕ те,—пирĕн унашкал спорнĕк çук, ун пек писсаттĕл çинçен те епĕ пайан тин илтетĕп, тесе ответлерĕ вăл.

Çавăнтах шăтралса çиленсе кайрĕ ман Çтаппан.— Ах, неопрасованнăй ухмах, хамăр çĕршыври керойсене палламастăн, тесе çышкине çăмăртаса прикашçĕк сăмси патне илсе пыçĕ Çтаппан.

Татах аран лăплантарса илсе тухрăм ăна макаçăнран.

Унтан вара çылай вăрах вăхăт Çтаппана тĕл пулаймасăр пурăнтăм.

Пĕр канмалли (выхотной) кун тухрăм Атăл хĕррине пăртак уçăлса çÿреме.

Сасартăк шăри-шари сас тухрĕ.

— Çын шыва сикрĕ! Тавай кимĕ, тавай спассаттĕлнăй крук парăр! теççĕ тĕрлĕрен сасăпа.

Пуçтарăнçĕ тем çухлĕ халăх. Епĕ те пытăм шавланă çĕре. Пăхатăп: пĕр пысăк матрус шывран пĕр лапсăркка пуçлă çынна сĕтĕрсе тухрĕ, çынни Çтаппан пулах кайрĕ. Вăл тăнсăр пулса кайнă. Вырттарçĕç кăна çĕре, салантарçĕç. Çав вăхăтра кăсйинçен пĕр хут татăкĕ сиксе тухрĕ.

— Çаплă писсаттĕле никам та хисепе хурасшĕн пулмарĕç, çавăнпа пайан шыва сиксе вилетĕп, тенĕ хуçĕ çинçе. Тата тепĕр йенçе сăвă пуçламĕ шĕ пур.

— Тен çăнах та Çтаппан паллă писсаттĕл пулмалла çын-и, тесе шухăшласа кун сăввине вуласа пăхамха, терĕм.

Акă çапла пуçланат сăвви:

„Кайрĕ инке вăрмана,
Кирпет çакса кăмпана.
Ула йытă çакăр куç,
Кукăр хÿре ăслă пуç.
Тăранах çийет какăрат,
Хурлансанах макăрат!“

Тенĕ сăвви сăмахĕсенçе.

— Ех, Çтаппан, Çтаппан! Мĕнле те пулсан савăта ĕçлеме кĕрсе, сотсиалисăмла воспиттани илнĕ пулсассăн, ку нушана курман пулăттăнçĕ есĕ, терĕм епĕ çак сăвва вуласа пăхсан.

Çтаппана Хĕрлĕ хĕрес кÿмипе илсе кайрĕç пулçнитсана, епĕ утрăм килелле. **Сенĕк.**

# Курнăçу.

—Ăçта кайан,
Йулташ?
Мĕн ма хашкан?
Çывă-и?
Мĕнле пурнан?
Кутамкуна ăçта
Ăсатан?
— Йулташ,
Ĕçсем çапла:
Килеп Çĕмĕрлерен.
Унта ĕçлерĕм
Нумай,
Анçах килĕшмерĕ
Кайран.
Утарнĕксем нумай,
Пĕр прокулсăр ĕçлеç
Ĕçле, ĕçле пĕр май...
Апат аван çийеç.
Вĕсен пурнăç аван,
Хурламастăп,
Савнăçуллă йалан—
Еп туйатăп.
Çтенкорсем
Таçтан шăтаç
Пире хаçат çинçе
Хăратаç.
Укça сахал тухат ĕçме.
Çавăнпала лекрĕ вĕçме
Тухса тартăм унтан
Ĕнер.
Теттаљстройа кайап тепĕр.
--Унта аван пули?
—Утас.
Пайан çитсе пули?
Васкас.
— Ухмах, йулташ, ухмах:
Ĕçлемесен ним те тухмаст.
Леттун пулса çÿрен,
Кама мĕн усă кÿрен.
Айта йара пар çулпа
Еп килĕшместĕп кунпа. **Малккай.**

# Тĕрĕсленĕ çухне.

Хăшпĕр макаçăнсен штаçĕсем пысăк. Çакарма май килмĕши? (Рапкор).

— Ма ыйхăласа ларатăн? Ĕç çуки мĕн сан?

— Ĕçĕ çук çав. Анçах уншăн епĕ айаплă мар. Правлени таварсем памаст.

— Апла еппин есĕ халĕ нимĕн те тумастăн?

— Нимĕн те тумастăп.

— Так-с. А есĕ тата кам пулатăн, йулташ?

— Епĕ унăн помошнĕкĕ пулатăп.

---

## «Канçĕрленсе çитнĕ етем»

— Кам пĕлет, тем те пур! Тÿлемеллисем нумай пит. Осоавиахима тÿлле, лоттерей пилетне çыранса ил, самоџотсем тунă çĕре те пар...

— Осоавиахима мĕн çухлĕ тÿллетĕн?

— Нимĕн те...

— Лоттерей пилетне миçе хутçен, мĕн çухлĕ çыранса илнĕ?

— Пĕре те...

— Сăмаџотсем тума пулăшас фонта мĕн çухлĕ патăн?

— Ку таранçен пĕр пус та...

— Тата мĕн ес кăшкăратăн?

— Сана мĕн? Пирĕн совет патшалăхĕнçе калаçма та йурамасти мĕн?!

# Такмаксем

(Веҫҫӑрсенҫе тухса каламалли).

**Пӗрле.**

Йтлӗр халӗ, йулташсем,
Тек ан сапӑр сӑмахсем...
Пурсӑра та виҫ приккас:

**Арҫын.**

Пӗрремӗшӗ—уссӑр сас
Ан тӑккалӑр хӑт пӗр тас;

**Хӗрарӑм.**

Иккӗмӗшӗ—хӑлхӑра
Ҫанк тӑратӑр хӑвӑртрах.

**Арҫын.**

Виҫҫӗмӗшӗ—кулмалли...
Ӑна ҫуккӑ ҫармалли.

**Хӗрарӑм.**

Пуҫлар, ав ҫав, Ҫеменрен,
Вӑл сирпӗннӗ парттирен.

**Арҫын.**

Ун йышшине пӗтӗмпех,
Сирпӗтмелле ҫийӗнҫех.

**Хӗрарӑм.**

Аташнӑ вӑл сылтӑма,
Пултараймасӑ тӳр пыма.

**Арҫын.**

Симӗс улӑх курсанах,
Ҫухӑрат вӑл таҫтанах:
— „Ой, ку тинӗс, тинӗс!..
Тумхах пулсан утаймас,
Ман ҫул пултӑр тикӗс!..
Унӑн куҫне савӑтсем
Ӳпре пек те курӑнмаҫ.
Ҫултан тунӑ хӑлхисем
Усӗм шавне тытаймаҫ.

**Арҫын.**

— „Иккӗмӗш пилӗкҫуллӑх,
Тӑвасҫӗ ӑна ҫирӗм ҫуллӑх,
Вара пулӗ тултарма...
Ҫарнас тӗнҫе култарма!—
Паккат оппортунис ҫапла,
Йынша-йыншах ҫакат ракла.

**Пӗрле**

Тӑватгӑрах туптатпӑр пиллӗке,
Хӗрӳ ӗҫре вӗрет ҫӗршыв!..

**Арҫын.**

Кула кулах ҫухратҫӗ пуршуй:
— „Тӗлӗк, тӗлӗк пилӗк ҫуллӑх
план,
Ӳстерейме колхос сирӗн уй...

**Хӗрарӑм.**

Мул хуҫисен тӗнҫинне
Криҫӗс алли пӑват мӑйсене.

**Арҫын.**

Капитал калат: „йун йухтӑр...
аван,
Вӑл йунпала кӑсйа кӳпӗ ман,
Ҫирӗпленӗ влас... ӗҫхалӑх ӗнси
Сӗвӗнӗ ансат тата виҫӗ си,“

**Хӗрарӑм.**

Улаҫ кашкӑрсем, тулласшӑн
пире,
Унта та кунта шаккаҫҫӗ шӑлне,
Ватасшӑн вӗсем ӗҫхалӑх власне,
Хӗсесшӗн татах ҫӗнелнӗ хире...

**Арҫын.**

Пиллӗке вӑхӑтра тултарар,
Кам ӑна канҫӗрлет—аркатар!

**Пӗрле.**

Ӗҫхалӑхӗн вӑйӗ хӗрӳллӗ кӑвар...
Тӑшман ҫулӑхсассӑн ҫӑлпар
салатар!!!

**Вениамин Туртуш.**

---

## Сыхлаҫҫӗ

Шалтах аптрарӗ сатпахҫа сойусӗ. Тарӑхса ҫиргӗ унӑн преҫетаттӗлӗ.

— Мӑн тӑвас?—терӗ вӑл хӑйӗн кӑнҫелерне кайнӑ ҫух йокширски сысна тӗл пулса.

— Нӑрӑх!—ответлерӗ сысна. Лаҫака шыраса малаллах шурӗ.

— Мӗнле нӑрӑ... Катка кирлӗ мана, катка!.. 40 тон хӑйар тӑварламалла ман... 2440 пӑт!.. Сыснана сура сурах йатлаҫрӗ претҫетаттӗл.

— Мӗн тӑвас?.. Мӗн тӑвас?.. Ну, мӗн тӑвас?—ҫухӑрат претҫетаттӗл хӑйӗн сотрутнӗкӗсене.

— Мӗн тӑвас.. Мӗн тумалла, йулташ претҫетаттӗл,—терӗҫ сотрутнӗкӗсем ҫӗтресе.

— Пирӗн сойусӑн 40 тон хӑйар тӑварламалла. Анҫах пӗр катка та ҫук. Ҫӑмӑрпа пӗрле хамӑр килкартинех сике-сике анӗҫха тесе кӗтрӗм. Ҫук. Вӑл хӑват пулмарӗ. Катка, ӑҫта есӗ, катка! Сире кӗтетпӗр... ех!..

— Каткашӑн хуйхӑрса ҫӗре шоплатрӗ претҫетаттӗл.

— Мӗн т ӑ в а с... Ҫӑнах хӑраса ӳкрӗҫ сотрутнӗксем,—тавай кашни урам вӗҫнех тӑрса каткасем сыхлас... Пире каткасем кирлине пӗлмеҫҫӗ пуҫ вӗсем... хӑйсемех. Килме тухнӑ та пулӗ.

— Тавай сыхлар,—тесе пурте тӗрлӗ ҫӗре хураллa саланҫӗҫ ..

...Каҫ пулса килҫӗ. Кӗтнӗ вӑхӑт ахалех пӗтрӗ... Ахалех шыва сикрӗ. Пӗр катка та тытаймарӗҫ сотрутнӗксем.

— Айакра пуҫха вӗсем... инҫетре. Тен, тепӗр уйӑх иртмесӗр те ҫитеймеҫҫӗ кунта,—шанҫӑкӗсене ҫухатса хваттерӗсене суллӑнҫӗҫ катка кӗтекенсем.

Килӗсха хӑйсемех,—тесе шухӑшласа илҫӗҫ вӗсен пуҫӗсем.

**Вениамин Туртуш.**

## Опеслиҫкӑна пӗтермелли май.

Опеслиҫкӑ мӗнне тӗрӗс ӑнланса йулас мар тесессӗн, Иетӗрнере тухакан „Колхоҫнӗк йулташӗ“ хаҫатӑн 26-мӗш номӗрӗнҫе ҫапӑннӑ Р. Л. Саппошнӗккӑв статйине тупса вуламалла.

Унта ҫырнӑ:
Обезличка еще царствует, даже в Районных учреждениях Нет у некоторых и вывески (Копхоз, Заготскот), в канцелярии нет надписи где, кто работает (райсойуз)...

Саппошнӗккӑв пӳрократ шухӑшӗпе, уҫрештенири опеслиҫкӑна пӗтерме, пӗрпӗр моҫар майлӑ хутошнӗка тупмалла. Ӑна вара пӗр витре сӑр парса уҫрештенин вывӗскине пысӑк саспаллисемпе ҫыртармалла. Тата кам хӑш сӗтел хушшинҫе, хӑш пукан ҫинҫе ларса ӗҫленине пӗлтерме стенасем ҫумне хутсем ҫырса ҫилӗмпе, ҫилӗм пулмасан, таҫӑка ҫӑкӑрпа) ҫыпӑҫтарса тухмалла та, вара опеслиҫкӑ пӗтсе ларат.

Ретактӑр йулташ, опеслиҫкӑна ӑнланман опеслиҫкӑ ҫукши сирӗн уҫрештенире? Хунар ҫутса шыраса пӑхха—тупаймӑҫи пӗр-пӗр кӗтесре,

# „КАПКӐН“ шурнал




çитес уйӑхсемшӗн
çырӑнса илме
манмани ес,
йулташ?

маннӑ пулсан
халех çырӑнса
илха йулташ!

Хакӗ—3 уйӑха—45 пус, 6 уйӑха—90 пус, çулталӑка—1 т. 80 пус.

# Ђӑваш Совет Писсаттӗлӗсен „Трактӑр“ аљманахӗ

**3-мӗш № пиђетре. Ку №рте çак маттериалсем пулаççӗ:**

1. **И. Тукташ**—„Вӑкӑр Çырми“ (повӗç).
2. **Усман**—Кунран кун (калав).
3. **Çаваç**— „105“ (ођђӗрк).
4. **Ђалтун**—Вутӑшӗнђен (повӗç сыпӑкӗ).
5. **Н. Айсмӑн**—Театтӑр (трамӑ).
6. **Тумилӗн** –„Шурилӗн керой (поемӑ).
7. **Петтокки**— „Партти“ (поемӑ сыпӑкӗ).
8. **Есрел**—„Рот-фронт“ (сӑвӑсем).
9. **М. Танилӑв** — Ђӑвашсен пролеттариллӗ искуствишӗн (крит. статйа).

Аљманаха Ђӑвашистат кӑлараť. Хакӗ те, виçи те çавах пулаť. Кӗнеке киоскисем урлӑ сутӑн илмелле. Çырӑнса илме те йураť.

Ретакси.



Слано в производство 19-VI-32 г.
Подписано к печати 5-VII-32 г.
Ответ. редактор П. Иванов
Секретарь журн. И. Илларионов

Ответлӑ ретактӑр **П. Иванов.**

Ст. ф. Б 200×285. Об‘ем 1 п. л. 112,000 п. з. в п. л. Изд. газ. „Канаш‘.

Уполн. Чувашлита № 780. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Заказ № 1134 Тираж 4650 экз

# Илеймен.

Йалти слушăшђисем хушшинђе халиђђен те сайом илме çырăнайманнисем пур.



— Петр Иванђђа халĕ пурăнма пит лайăх: çырма вулама лайăх вĕреннĕ,
— Вулама вĕреннĕ пулсан та, çырма вĕренеймен çав. Халиђен те сайом çырăнса илеймен.